Муркаш район хаçачĕ

# „Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

65-66 (7490-7491) №№ ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи августăн (çурла) 11-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Ыран – Строительсен кунĕ

**ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН СТРОИТЕЛЬСТВО КОМПЛЕКСĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**
**СИРЕ СТРОИТЕЛЬСЕН КУНĔ ЯЧĔПЕ САЛАМЛАТĂП!**

Сирĕн пархатарлă профессире пултарулăх кăна мар, тĕрĕс шутлав та, пысăк йĕркелĕх те, ответлăх та кирлĕ. Эсир çĕклекен пурăнмалли çуртсемпе обществăлла объектсем хуласемпе ялсене илем кӳреççĕ, çынсене хăтлăхпа лайăх кăмăл, ыранхи кун шанчăклăхне парнелеççĕ. Сирĕн тăрăшулăха пулах ĕнтĕ Чăваш Ен строительство калăпăшĕ енĕпе çĕршывра малти вырăнсенчен пĕрне йышăнать. Республикăра «Раççей гражданĕсене – хăтлă çурт-йĕр» приоритетлă наци проекчĕ, ытти проектсем ăнăçлă пурнăçа кĕрсе пыраççĕ, шкулсем, больницăсем, ял хуçалăх объекчĕсем çĕнĕрен тăваççĕ тата киввисене реконструкцилеççĕ. Строительство профессийĕсен пиншер çынни паян газ кĕртес, шывпа тивĕçтерес, çул-йĕр тăвас, физкультурăпа сиплев комплексĕсем çĕклес енĕпе палăртнă республика программисене пурнăçа кĕртессипе тăрăшать. Промышленность, энергетика тата транспорт предприятийĕсем çĕнелсе пыраççĕ, çĕнĕ заводсем çĕкленеççĕ.

Эпир сирĕнпе пĕрле хальхи вăйлă, конкуренцие чăтма пултаракан тата хăй патне илĕртекен Чăваш Ене тăватпăр. Шанса тăратăп, сирĕн профессионализм, ăнтăлу тата энерги республикăн экономикипе социаллă пурнăçне аталантармалли чи хăюллă планĕсене ăнăçлă пурнăçлама майсем туса парĕç.

Пурне те сире çирĕп сывлăх, çĕнĕ çитĕнӳсем тата телей сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ**
**Н.В. ФЕДОРОВ.**

**ХИСЕПЛĔ СТРОИТЕЛЬСЕМ!**
**СИРЕ ПРОФЕССИ УЯВĔПЕ ПĔТĔМ ЧУН-ЧĔРЕРЕН САЛАМЛАТĂП!**

Эсир тăрăшнипе пирĕн район кунран-кун илемлĕрех те хăтлăрах пулса пырать, çынсен пурнăç условийĕсем те лайăхланса пыраççĕ. Эсир çĕнĕрен те çĕнĕ çуртсем çĕклетĕр, çулсем тăватăр, юсатăр. Сирĕн тăрăшулăхăра пулах районти пур ялта та çут çанталăк газĕ çунать. Çак ырлăха халĕ çĕнĕ çуртсене пурăнма кĕрекенсене парнелетĕр. Сирĕн ĕç, чăннипех те, чыслă, хисеплĕ. Тавах сире район аталанăвĕшĕн ырми-канми вăй хунăшăн.

Эсир малашне те ялсен инфраструктурине аталантарассинче, вĕсен социаллă пурнăçне лайăхлатассинче татах та тăрăшарах ĕçлессе шанатăп. Сирĕн ĕçĕн пахалăхĕпе тухăçлăхĕ пĕр вĕçĕм ӳссех пытăр. Умри тĕллевĕрсем пурнăçлансах пыччăр. Пурне те ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу, килĕшӳпе тату пурнăç сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю.А.ИВАНОВ.**

**Строительсене, отрасль ветеранĕсене Строительсен кунĕ ячĕпе, физкультура преподавателĕсене, тренерсене тата спортпа туслисене Физкультурниксен кунĕ ячĕпе Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕ, «Единая Россия» фракци членĕ Павел Владимирович СЕМЕНОВ та саламлать, пурне те ырлăх-сывлăх, ăнăçу, телей, малашлăха пăхма çирĕп шанчăк сунать.**

## Ыран – Физкультурниксен кунĕ

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!**
**СИРЕ ФИЗКУЛЬТУРНИКСЕН КУНĔ ЯЧĔПЕ САЛАМЛАТĂП!**

Спортпа туслă çын вăйлă, хитре, хăюллă тата хăйне хăй шанать, унăн çĕнтерӳпе палăртнă тĕллев патне ăнтăлу çирĕпленет. Спорт вăл – сывлăх, сывă наци вара – çирĕп çĕршыв.

Чăваш Ен – спортпа туслă республика. Пирĕн ентешсем хушшинче хăйсен çĕршывне пĕтĕм тĕнче шайĕнче чапа кăларнă профессионаллă спортсменсем сахал мар. Хамăрăн Олимп вăййисен чемпионĕсен çĕнтерĕвĕсемпе эпир тивĕçлипех мухтанатпăр, вĕсем пĕрремĕш пулма ăнтăлни вара çамрăк ăрушăн тĕслĕх пулса тăрать.

Спорт стилĕпе сывă пурнăç йĕркине суйласа илекенсем Чăваш Енре ытларах та ытларах. «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ» тата «Нацисен кросĕ» спорт акцийĕсене республикăра çуллен тĕрлĕ ӳсĕм шайĕнчи вуншар пин çын хутшăнать. Паян Чăваш Енре физкультурăпа тата спорт ĕçне массăллăн хутшăнма майсем хушăнса пыраççĕ. Ялсемпе хуласенче хальхи вăхăт ыйтăвĕсене тивĕçтерекен спорт залĕсемпе бассейнсемлĕ спорт керменĕсем çĕкленеççĕ. Юлашки икĕ çул хушшинче физкультурăпа сиплев комплексĕсем 6 ĕçе кĕртнĕ, кăçал татах спорт керменĕсем 5 хута каймалла. 2010 çул тĕлне вара вĕсем республикăра 30 яхăн пулмалла.

Республикăра Пĕтĕм Раççей шайĕнчи ăмăртусемпе тĕнче чемпионачĕсене ытларах ирттерме пуçларĕç. Çитес çул Шупашкара 70 яхăн çĕршывран спортсменсем пухăнаççĕ. Чăвш Ен тĕп хулинче хăвăрт утассипе 2008 çулхи тĕнче кубокĕ иртет. Ăна пĕтĕм тĕнче сăнаса тăрĕ.

Пур спортсменсене, тренерсене, спорт шкулĕсенче вĕренекенсене, спортпа туслисене пурне те Физкультурниксен кунĕ ячĕпе саламлатăп! Сире лайăх спорт форминче пулма, ăнăçусем тата спорт аренисем çинче çĕнтерӳсем, çирĕп сывлăх, ăнăçусем, телей тата юрату сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ**
**Н.В. ФЕДОРОВ.**

**ХИСЕПЛĔ ФИЗКУЛЬТУРНИКСЕМ, СПОРТСМЕНСЕМ, СПОРТПА ТУСЛĂ ÇЫНСЕМ ТАТА ФИЗКУЛЬТУРА ЮХĂМĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**
**СИРЕ ФИЗКУЛЬТУРНИКСЕН КУНĔ ЯЧĔПЕ САЛАМЛАТĂП!**

Физкультурăпа спорт кашни çыннăн пурнăçĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ. Мĕншĕн тесессĕн вĕсем пире çирĕп сывлăхлă пулма, çавăн пекех кăмăла çирĕплетме пулăшаççĕ. Сывлăхлă, çирĕп кăмăл-туйăмлă, сывă пурнăç йĕркипе пурăнакан çынсем вара район тĕрекĕ пулса тăраççĕ, кирек епле йывăрлăха çĕнтерсе, умри тĕллевсене пурнăçлаççĕ. Ку тĕлĕшпе эсир нумай тимлетĕр. Тавах сире çакăншăн.

Хăвăрăн ăсталăхăрпа пуян опытăра эсир çитĕнекен ăрăва паратăр. Ыттисемшĕн вăй-хал паракан çăлкуç пулса тăратăр. Сирĕн пуçарулăхăрпа ырми-канми ĕçĕре пулах ĕнтĕ пирĕн ентешсем республика шайĕнче çеç мар, Раççей, Европа, тĕнче шайĕнчи ăмăртусене хутшăнаççĕ, район чысне хӳтĕлеççĕ. Вĕсем, çĕнтерӳсем туса, районăн ятне-сумне çĕклеççĕ, хăйсен ырă тĕслĕхĕпе ыттисене хавхалантарса пыраççĕ. Çитĕнекен ăрăва воспитани парас ĕçре çакă питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Физкультурăпа спорт пуриншĕн те кун йĕркин уйрăлми пайĕ пулса тăтăр. Сире малашне татах та пысăкрах çитĕнӳсем тума çирĕп сывлăх, телей, ăнăçупа ăнтăлу, хавхалану, сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Республикăра

### 2 млрд тенкĕлĕх çулсем турăмăр

“Чăваш çул-йĕрĕ” проект активлă пурнăçа кĕнĕ май çул-йĕр тума уйăрнă укçа-тенкĕпе туллин усă курасси пĕрре те иккĕлентермест. Çакăн çинчен августăн 6-мĕшĕнчи пресс-конференцире ЧР хула тăвас тата обществăлла инфраструктурăна аталантарас ĕç министрĕ А. Гончаров каланă. Çулсем тăвас ĕçре кăçал 4 – 4,5 млрд тенкĕлĕх ĕçсем палăртнă пулсан, паянхи куна вĕсене 2 млрд тенкĕлĕх пурнăçланă.

Муркаш районĕнче çулталăк пуçланнăранпа 3,53 км çулсем ĕçе кĕртнĕ. Районти строительство ĕçĕсем пирки паянхи хаçатра тĕплĕнрех вуласа пĕлме пултаратăр.

## Уяв умĕнхи интервью

### Çуртсем те, çулсем те тăватпăр

***Ыран – Строительсен кунĕ. Çак профессин савăнăçĕпе йывăрлăхĕсем кашни çыннах çывăх, мĕншĕн тесен пĕрисем хăйсене валли хăйсемех çурт çавăраççĕ. Теприсем вара асăннă професси çыннисен ылтăн аллисем хăпартнă çуртăн хваттерĕсенче пурăнаççĕ. Сахал-и тата хуçалăхра, халăхри пек каласан, стройка ĕçĕсем? Уяв умĕн шăпах çак ăстасен паянчченхи ĕç кăтартăвĕсем тавра калаçас кăмăл пур. Тăван Муркаш енĕмĕр кунран-кун илемленсе, çирĕпленсе пыни те строительсен тăрăшулăхне кăтартса парать те. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе, капиталлă строительствăпа архитектура, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçипе В. Г. НИКИТИНПА çак ыйтусем тавра калаçрăм та.***

**– Муркашра юлашки çулсенче нумай хваттерлĕ çуртсем пĕрин хыççăн тепри хута каяççĕ. Ялсенче те паян малтанхинчен чылай пуянрах та капмар çуртсем çĕкленеççĕ. Пĕтĕмĕшле лару-тăру ку тĕлĕшпе мĕнле?**

– Кăçалхи 7 уйăхра пĕтĕмпе районта 12150 тăваткал метр чухлĕ уйрăм çынсен 23 çурчĕ çĕкленчĕ. Пĕлтĕр çак вăхăтра ку кăтарту 10040 тăваткал метрпа (30 çурт) танлашнăччĕ.

Нумай хваттерлĕ çуртсене илес пулсассăн, Муркашри Парк урамĕнчи 2 подъездлă çурта туса пĕтернĕпе пĕрех. Çак 4 хутлă çуртăн пĕтĕм 40 хваттерĕн уççисене те вĕсен пулас хуçисем кăçалах илĕç.

Хальхи вăхăтра çавăн пекех Москакассинче те çĕнĕ çуртра ĕçсем малалла пыраççĕ. 36 хваттерлĕ пулать вăл. Пĕрремĕш подъездне çитес вăхăтра хута ямалла.

**–Пирĕн аннесемпе аттесем ĕмĕр тăршшĕпех çурт лартма укçа пуçтарнă. Паян вара патшалăх çамрăксене çамрăклах капмар çуртра е хăтлă хваттерте пурăнма майсем туса парать. Кăçал çак çăмăллăхсемпе чылайăн усă курнă-и?**

–Социаллă ипотека кредитне сахал тупăшлă çемьесене паратпăр. Ăна 15 çуллăха 6 процентпа параççĕ. Республика бюджетĕнчен çак тĕллевпе пирĕн района кăçал 1988 пин тенкĕ уйăрнă. Çав суммăран 1296 пин тенкипе усă курнă ĕнтĕ. Урăхла каласан, çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма учета илнĕ 4 çемьене панă ăна.

Çамрăк çемьесем те çуртйĕр çавăрнă е туяннă чух унăн хакĕн 40 процентчĕ чухлĕ патшалăх пулăшăвĕпе усă кураççĕ. 2002 – 2010 çулсем валли пăхнă “Çурт-йĕр” тĕллевлĕ федераллă программăн “Çамрăк çемьесене çуртйĕрпе тивĕçтересси” подпрограммипе килĕшӳллĕн асăннă пулăшăва илме кĕртнисен пĕлтĕрхи списокĕнче 6 çамрăк çемье тăнă. Çак тĕллевпе уйăракан укçа-тенкĕ – 1750 пин тенкĕ район администрацийĕн счечĕ çине 2007 çул пуçламăшĕнче çеç килнĕрен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатакансен пĕлтĕрхи списокĕнче тăнă çав 6 çемье августăн 1-мĕшĕ тĕлне асăннă çăмăллăхпа усă курма май паракан свидетельствăсене илчĕç.

**(Вĕçĕ 7-мĕш стр.).**



**Пиккикассине те асфальт çул çитрĕ.**

## Пĕрлехи вăйпа малашлăха шанса

### Ялсем çĕнĕ пурнăç çулĕ çинче

Общество аталанăвĕнче ял пурнăçĕ пысăк вырăн йышăнать. Хресчен туса илнĕ ял хуçалăх культурисем, выльăх-чĕрлĕх отраслĕ паракан продукци çĕршывăн апат-çимĕç базин никĕсĕ пулса тăраççĕ. Апла пулсан – çĕршыв хăвачĕн тĕп палли. Анчах çакна тивĕçлĕ шайра тытса пыракан çĕр ĕçченĕ тата ялта пурăнакан çын паян мĕнле условисенче пурăнать-ха? Çак ыйту çине курăмлă хурав тупас тесе строительсен профессиллĕ уявĕ умĕн фотоаппарат илсе çула тухрăм. Çатракасси ял тăрăхне кĕрекен Çатракасси ялĕнче килти хушма хуçалăхсенчи строительство ĕçĕсем пĕр çĕрте çеç пымаççĕ. Кашниех чунне парса ĕçлени вĕсем ытлă-çитлĕ строительство материалĕсем хатĕрленинчен тата хăтлăран та хăтлă çуртсем çавăрнинчен курăнать. Акă З. Павлова çĕнĕ пӳрт тума пуçлани те “Свобода” хуçалăхра выльăх пăхнă çĕрте ĕçлекен хĕрарăм паянхи кунпа çеç пурăнманнине çирĕплетет. Сăн ӳкерчĕкре эсир асăннă хуçалăхри строительство ĕçĕсен пĕр пайне куратăр. Арçынсемпе хĕрарăмсем те йывăрлăхсене пăхмасăр пĕрле пĕр тĕллевпе вăй хураççĕ. Тăван районăмăрпа илес пулсан вара... Район администрацийĕн капиталлă строительство пайĕнчен илнĕ кăтартусенчен çакă курăнать: юлашки 10 çулта район çыннисем хăйсен вăйĕпе 1440 пӳрт тунă та кăçалхи 23 пӳртсĕр пуçне пурăнма кĕнĕ. Пурăнмалли лаптăка тăваткал метрпа шутласан, ку виçе 194440 тăваткал метрпа танлашать.

Ял çынни паянхи пурнăçра пӳрт-çурт çавăрма укçатенкĕне ăçтан илет? Мĕнле çăмăллăхсемпе усă курать вăл? Кам пулăшать ăна çăмăл мар çак ĕçре? Çак ыйтусем çине эсир паянхи хаçатăн 7-мĕш страницинче вуласа пĕлме пултаратăр. Ку пĕр тĕслĕх кăна пулĕ.





**Анатолий БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕсем.**

## Юбилей

### Саламлатпăр

Пирĕн хаклăран та хаклă çыннăмăра, мăшăра, аннене, кукамая, хунямана, тăхлачăна, аппана – Турай ял тăрăхне кĕрекен Çулав ялĕнче пурăнакан **Зоя Борисовна ЛЕОНТЬЕВАНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн шăранса тухакан чи ăшă туйăмсемпе саламлатпăр. Вăрăм та çутă ăраскаллă ĕмĕр пурăнма ырлăх-сывлăх, иксĕлми вăй-хал, çемьере юратупа килĕшӳ, килçуртра татулăхпа çураçулăх, ырлăхлă та тивлетлĕ пулма сунатпăр. Пурнăçу яланах ăнса пытăр.

**Салампа мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, йăмăкĕсен çемйисем, çывăх тăванĕсем.**